Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Пӗр №-рӗ 10 пус. 19-мӗш ҫул тухать.

1937 ДЕКАБӖР 12 ВЫРСАРНИКУН 284 (4796)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ

Редакципе кантур адресӗ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑрӑн 0—67. Ред. заместителӗн 0—88. Редакци секретарӗн 4—40. Дежурнӑйӑн 6—23

Пайан Аслӑ Совета суйламали кун
ПУРТЕ СУЙЛАВА!

Большевиксен партийӗшӗн сасӑлатпӑр

Историлӗ кун—декабӗрӗн 12-мӗшӗ ҫитрӗ. Пайан пӗтӗм халӑх ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутатсем суйлама каять.

Суйлав бюллетенӗсем ҫине совет халӑхӗн чи лайӑх ывӑлӗсен, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн, социализмшӑн шанчӑклӑн та ҫине тӑрса кӗрешекенсен хушамачӗсене кӗртнӗ. Аслӑ Совета депутата суйлама кандидатсене фабрикӑсемпе заводсенче рабочисемпе служащисен пӗрлехи пухувӗсенче, ҫар чаҫӗсенче—красноармеецсен пухувӗсенче, ялсенче—колхозниксемпе йединоличниксен пухувӗсенче коммунистсемпе партире тӑманнисем пӗрле тӑратнӑ.

Коммунистсем, Ленин—Сталин аслӑ партийӗн членӗсем, суйлава партипе тӑман рабочисемпе, хресченсемпе, служащисемпе, интеллигентсемпе блок туса, союз туса тухаҫҫӗ. Большевиксен партийӗ партире тӑманнисенчен нихҫан та уйӑрӑлса тӑман, уйӑ ӑлмаст те. Большевиксен партийӗпе партире тӑманнисем хушшинчи ҫыхӑну тӗреклӗ, вӑл ҫыхӑнува никам та уйӑрма пултараймаст.

Пирӗн халӑх большевиксен партине йӑлӑнех шанса тӑнӑ, малалла та шанса тӑрӗ, мӗншӗн тесен Ленинпа Сталин туса тӗреклентернӗ парти йӑчӗпе социализмӑн аслӑ ран та аслӑ ҫӗнтерӳвӗсем ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

Помещиксемпе капиталистсем пуҫпулса тӑнӑ чухне пирӗн ҫӗршыв теттем, чухӑн, праваҫӑр пулна. Халь ӗнтӗ пирӗн тӑван ҫӗршыв телейлӗ, хӑватлӑ, никам ҫӗнтерейми пулса тӑчӗ.

Кам туса пачӗ-ха пире ҫакна?—Большевиксен партийӗ!

Пирӗн ҫӗршывра текех ҫук ӗнтӗ експлоататорсем, ҫук помещиксем, кулаксем, фабрикантсем, ҫын ӗҫленӗ шутпа йӑлӑ ӗҫсе сапӑрла кансем те ҫук. Халь ирӗклӗ совет ӗҫчӗн ҫыннисем етем телейӗпе савӑнӑҫӗшӗн ӗҫлеҫҫӗ.

Кам туса пачӗ-ха пире ҫакна?—Большевиксен партийӗ!

Кайа йулнӑ промышленнӑҫ вырӑнне сталинла пиатилеткӑсен ҫулӗсенче социализмлӑ хӑватлӑ индустри туна. Вакӑ та сапаланчӑк хресчен хуҫалӑхӗсем вырӑнне йалта социализмлӑ шултра хуҫалӑхсем—колхозсемпе совхозсем ӳссе тӗрекленчӗҫ, вӗсем патша Российӗ вахӑтӗнчи йалхуҫалӑхӗнчен икӗ хут нумайрах продуктӑсем туса кӑлараҫҫӗ.

Кам туса пачӗ-ха пире ҫакна?—Большевиксен партийӗ!

Пирӗн ҫӗршыв ӗҫсӗрлӗх хӑрушлӑхӗсене пӗлмест тата вӑл хӑрушлӑхсене ӗнтӗ нихҫан та пӗлмӗ. Пирӗн рабочисемпе служащисем ыранхи кун ҫине шанса тӑраҫҫӗ. Пирӗн хресченҫене ҫук пурнӑҫпа выҫлӑхран йалан лӑхах хӑтарнӑ, хресчен сене пуйан та культурӑлӑ пурнӑҫ туса панӑ.

Кам туса пачӗ-ха пире ҫакна?—Большевиксен партийӗ!

Патша Российӗнче ӗҫлекен ҫыншӑн пӗлӳсем туйанмали ҫул хупӑ пулнӑ. Халь мӗн пур ачасем пурте шкулсенче вӗренеҫҫӗ, халь пирӗн ҫӗршыври ҫынсем пурте пекех хутла пӗлеҫҫӗ. Пирӗншӗн, пирӗн ачасемшӗн институтсен, курссен, шкулсен, академисен алӑкӗсем уҫа государствӑ пире вальли театрсем, кино, библиотекӑсем тӑват, кӗнекесем, журналсем, хаҫатсем пичетлет.

Кам туса пачӗ-ха пире ҫакна?—Большевиксен партийӗ!

Хӗрарӑм патша Российӗнче чура пулнӑ, вӑл капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенче пуринче те халӗ те чура пулса тӑрат. Совет ҫӗршывӗнче хӗрарӑма ирӗклӗ те пӗртан правалӑ. Совет ҫӗршывӗнче анчах телейлӗ ача амӑшӗ пулма условисем туса пана.

Кам туса пачӗ-ха пире ҫакна?—Большевиксен партийӗ!

Патша Российӗ халӑхсен тӗрми нацилӗ пусмӑрлӑхпа праваҫӑрлӑх ҫӗршывӗ пулнӑ. Совет ҫӗршывӗнчи халӑхсем пӗртанлах тата ирӗклӗх никӗсӗ ҫинче туслӑ, телейлӗ ҫемйене пӗрлешнӗ.

Кам туса пачӗ-ха пире ҫакна?—Большевиксен партийӗ!

Пирӗн чап тата пирӗн мухтав пулса тӑракан ҫак мӗн пур ҫӗнтерӳсене туме ҫӑмӑл пулман. Вӑл ҫӗнтерӳсене социализмла государствӑн шалти тата тулти тӑшманӗсене хирӗҫ хаяррӑн кӗрешсе тунӑ. Троцкисла-бухаринла тата урӑх йышши шпионсене, диверсантсене, сутӑнчӑксемпе ҫынвӗлеренсене совет государствин тӗрӗсленнӗ те ҫирӗп каратель органӗсем сиенсӗрлетсе пӗтерсе пыраҫҫӗ. Тулашри тӑшмансен хӑтланӑвӗсене хирӗҫ Рабочисемпе Хресченсен хӑватлӑ, никам ҫӗнтерейми Хӗрлӗ Ҫарӗ тӑрат, ӑна вӗрҫӗнӗ хӑватлӑ техникапа калама ҫук паха хӗҫпӑшаллантарнӑ, ҫав техникана ӑна пирӗн социализмла индустри пана.

Кам тӑрӑшнипе пирӗн тӑван ҫӗршыв никама пӑхӑнса тӑман ҫӗршыв пулчӗ? Ӑна большевиксен партийӗ тӑрӑшнипе тунӑ!

Империалистсем пӗр хут мар пире вӑрҫа сӗтӗрсе кертме хӑтланчӗҫ. Лайӑх шухӑшласа тунӑ, партипе правительствӑ ӗҫне ҫирӗп пурнӑҫа кертсе пыракан мирлӗ политика капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенчи вӑрҫӑшӑн ҫунакан ушкӑнсен йутҫӗршывсене тӗртсе илес политикине тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пыма пулӑшрӗ. Ақӑ ӗнтӗ вунулта ҫул хушши совет халӑхӗ вӑрҫӑлӑ ҫапаҫусенчен хӑтӑлса пурӑнат, мирлӗ пурнӑҫӑн ырлӑхӗсемпе усӑ курат, хӑйӗн мирлӗ ӗҫне малалла туса пыма пултарат.

Кам туса пачӗ-ха пире ҫакна?—Большевиксен партийӗ!

Ҫапла вара пурте пӗр ҫын пек ССР Союзӗн Аслӑ Советне суйлама кайар, хамӑр сасӑмӑрсене коммунистсемпе партире тӑманнисем пӗрле тӑратнӑ ҫынсемшӗн парар!

ССР Союзӗн Аслӑ Советне депутатсем суйланӑ ҫӗре хутшӑнас тивӗҫе пурнӑҫа кӗртмен ҫын пирӗн хушӑмӑрта пӗртте ан пултӑр! Суйлав участкине кайман тата Союз Совечӗпе Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама халӑх пӗршухӑшлӑ пулса тӑратнӑ кандидатсемшӗн хӑйӗн сасне паман ҫын пирӗн хушӑмӑрта пӗртте ан пултӑр!

Сывӑ пултӑр пирӗн хӑватлӑ тӑван ҫӗршыв!

Сывӑ пултӑр рабочисемпе хресченсен союзӗ!

Сывӑ пултӑр Совет Влаҫӗ!

Сывӑ пултӑр Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийӗ!

Чехословакири пичет Сталинла Конституци ҫинчен

ПРАГА, 5/XII. (ТАСС). Чехословакири рабочисемпе коммунистсен пичечӗ Сталинла Конституцийӗ йышӑннӑранпа пӗр ҫулталӑк тултарни ҫинчен нумай ҫырат. Хаҫатсем пысӑк умстатйасем пичетлесе кӑларнӑ. Статйасенче совет ҫӗршывӗн ҫӗнӗ Конституцийӗ ССР Союзӗнчи халӑхсемшӗн ҫӗҫ мар, капиталисӑмла тӗнчери ӗҫҫынисемшӗн те пит паха пулса тӑнине палӑртса ҫырнӑ.

Чехословакири коммунистсен партийӗн тӗп органӗ „Руде право"—Сталинла Конституци, ССР Союзӗнчи социалисӑмӑн пит пысӑк ҫӗнтерӳвӗсене палӑртса тӑраканскер социализмла демократилӗ ҫӗнӗ епохӑ уҫса панӑскер, ӗҫлев правине, канӑҫ правине, вӗренӳ правине, ССР Союзӗнчи ӗҫҫынисен пурнӑҫӗ тӑтӑшах лайӑхланса пырассине гарантилет, тесе ҫырат. Хаҫатри статйа: Сталинла Конституци телейлӗ пурнӑҫ правине гарантилет, тесе ҫыриипе вӗҫленет.

ССР Союзӗнчи суйлав кампани ҫинчен йутҫӗршывсенчи пичет мӗн ҫырат

Францин нумай хаҫачӗсем ССР Союзӗн Аслӑ Совет суйлавне ҫутатса статйасем пичетленӗ.

„Ер нувель" хаҫат Сталинла Конституци чи демократилине палӑ тӑват тата Совет Союзӗн гражданӗсемшӗн нимӗнле политика чикӗлешӳ те ҫуккине кӑтартса парат. Хаҫат суйлав кампанинче Совет Союзӗн гражданӗсем пысӑк активлӑхлӑ пулассине палӑ тӑват. „Совет Союзне кӗрекен вуннӑ республикӑран кашни,—тесе ҫырат хаҫат,—пӗр танлӑ правапа уса кураҫҫе. Ҫӗнӗ Сталинла Конституци националӑнӑҫсен тӑванлӑ туслӑхне туса панӑ. Вӑл совет государствине ӗлӗкхи Российӑ пӗлме те пултарайман—пӗрлӗх туса парат. Ку фактсем—тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхма тивӗҫлӗ фактсем".

Франци компартин „Йуманите" хаҫачӗ ҫапла ҫырат: „Совет суйлавӗ социалисӑм ҫеҫ пур ӗҫҫынни емшӗн те тулли демократисӑм туса пама пултарнине ӗнентерет. Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче аслӑ Социалисӑмла Совет Республикӗсен Союзӗн халӑхӗсен политикӑлӑ тата моралле пӗрлехӗн никам сирсе пӑрахайми вайне пӗтӗм тӗнче ӗненет.

Чехословакин чылай хаҫачӗсем декабӗрӗн 10-мӗшӗнче йӑтӑрласа ҫырнӑ умстатйасенче ҫӗршывӑн аслӑ талкӑшӗнче халӑхсен пысӑк массисене ҫавӑрса илнӗ, анлан аслӑлнӑ суйлав умӗнхи кампанине ӑнласа паракан пуйан фактлӑ материалсене илсе кӑтартаҫҫӗ. Статйасенче суйлавҫӑсен активлӑхӗ капиталисӑмла ҫӗршывсемшӗн нихҫан курманла ҫавӑрӑнса кайнинчен питӗ хытӑ тӗлӗнни ҫинчен калана. (ТАСС).

Стахановецсен паллӑ рекорчӗсем

Стахановецсем стахановла рекордсен сталинла декадине социалисӑмлӑ ӗҫӗн чаплӑ образецӗсемпе паллӑ тунӑ.

Мускаври станоксем тӑвакан „Красный пролетарий" завод фрезеровщикӗ Царев йулташ декабӗрӗн 10-мӗшӗнче ӗҫре нихҫан пулман рекорд тунӑ. „ТС—90" токарь-сверлӑ станокӗн башмакӗсен тӗпӗсене тунӑ чухне вӑл 7 сехет хушшинче нормӑна 5 793 процент тултарнӑ. Царев йулташ 500 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ.

Сталинла декадӑн вунӑ кунӗ хушшинче „Красный пролетарий" заводра икӗ механически цехра нормӑна пин ытла процент тултарса 12 рекорд, нормӑна 500-тен 1000 ҫитиччен процент тултарса 28 рекорд тунӑ.

Декадӑн йулашки кунне ӑна пуҫаракансем—Мускаври Сталински районӗнчи малта пыракан предприйатисем ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемпе паллӑ тунӑ. Л. М. Каганович йачӗпе тӑракан прожектор заводӗнче слесӑр Леонтйев йулташ декабӗрӗн 10-мӗшӗнче сменӑри нормӑна 980 процент тултарнӑ. Токӑр Воробйов йулташ 5 нормӑ, токӑрсем Бодропосовпа Силйакин йулташсем тата жестйанщик Поляков йулташ 4 нормӑ ытла панӑ. Куйбышев йачӗпе тӑракан електрокомбинат декабӗрӗн 9-мӗшӗнче пӗр кунри заданине 107,6 процент тултарнӑ.

Донбассри „Орджоникидзеуголь" тресчӗн „Красный профинтерн" шахтинче кӑмрӑк катакан Сологуб йулташ декабӗрӗн 9-мӗшӗнче 6 сехет хушшинче 160 тваткӑл метр кӑмрӑк катса, нормӑна 3.200 процент тултарнӑ. Ун хыҫҫӗнчен Быковский, Говорков тата Сергейев сирӗплетсе пынӑ. Бригада сменӑра 740 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ. Ҫав шахтӑрах кӑмрӑк катакан Золотарьов йулташ тата пысӑкрах ҫитӗнӳ тунӑ. Декабӗрӗн 10-мӗшӗнче вӑл сменӑра 340 тонна кӑмрӑк катса, нормӑна 3.886 процент тултарнӑ. Ун хыҫҫӗнчен Помасенко, Мясников тата Василий Сологуб ҫирӗплетсе пынӑ. Бригада 1.004 тенкӗ ӗҫлесе илнӗ.

(ТАСС)

А. И. СТЕЦКИЙ йулташ 12-мӗш участкӑри суйлавҫӑсем патӗнче

Декабӗрӗн 10-мӗшӗнче, каҫхине, строительсен клубӗнче Чӑвашстройтрестпа Чӑвашпроектра ӗҫлекен рабочисемпе инженерла-техникла работниксен суйлав умӗнхи пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидат—ПСК(б)Парти Тӗп Коми еччен парти пропагандипе агитаци пайӗн пуҫлӑхӗ Алексей Иванович Стецкий йулташ пулчӗ.

А. И. Стецкий йулташ залӑна пырса кӗрсен, халӑх ӑна ура ҫине тӑрса тӑвӑллӑн ала ҫупса ашшан кӗтсе илчӗ. „Сталин йулташӑн ҫывӑх соратникне Стецкий йулташа салам!" „Пирӗн кандидат Стецкий йулташ сывӑ пултӑр!", тенӗ сасӑсем илтӗнеҫҫӗ, урра кӑшкӑраҫҫӗ.

А. И. Стецкий йулташ:—Инженерсене, техниксене, строительствӑ рабочийӗсене салам!—тесе ответлесен тӑтах хытӑн ала ҫупни кӗрлесе тӑрат.

Малтанах ПСК(б)Парти Обком секретарӗ Павлов йулташ Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партин Тӗп Комитечӗ мӗн пур суйлавҫӑсене чӗнсе калани ҫинчен доклад туса пачӗ.

Доклад пӗтсен, стахановецсем, инженерсем, килхуҫи хӗрарӑмӗсем пирин хыҫҫӑн тепри тухса сӑмахсем калаҫҫӗ. Телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса панӑ Сталин йулташа ырӑ сунса тав тӑваҫҫӗ. Пур суйлавҫӑсене тӗ парти ӗҫӗшӗн тӑракансемшӗн, ӗҫхалӑхӗн тата та пуйан та культурӑлӑ, хаваслӑ пурнӑҫӗшӗн ӗҫлекенсемшӗн сасӑлама чӗнеҫҫӗ.

Трибуна ҫинче Метельков стахановец.

— Епӗ,—тет вӑл,—декабӗрӗн 12-мӗшӗнче хамӑн сасӑна коммунистсен партине, коммунисӑм обществи тӑвассишӗн паттӑрӑн кӗрешекенсене паратӑп. Тӑшмансем пирӗн строительствӑна ишӗлтерсе антӑрасшӑн пулчӗҫ. Вӗсен ӗҫ тухмарӗ. Вӗсенчен вӑл пулаймасть те. Рабочи вӑйлӑ та ҫирӗп. Рабочи Сталинпа пӗрле ӳссе ҫирӗпленнӗ.

А. И. Стецкий йулташ тухса сӑмах каларӗ.

— Аслӑ Совета суйлама ман кандидатурӑна тӑратни вӑл мана хисеплени кӑна мар, вӑл парти членне шанни, парти Тӗпкомӗн членне шанни пулат. Парти членӗнче 22 ҫул хушши тӑратӑп. Сталин йулташ йертсе пыракан Тӗп Комитетра—большевиксен штабӗнче 10 ҫул хушши ӗҫлетӗп,—терӗ Стецкий йулташ хӑйӗн сӑмахӗнче.

А. И. Стецкий йулташ хӑйӗн сӑмахне рабочисене хумхантармалла, вӗсен хастарлӑхне ҫӗклентермелле тӗплӗн, ӑнланмала калат.

— Пирӗн парти суйлава партипе тӑман ҫынсемпе таччӑн ҫыхӑнса, пӗрле пырат. Епӗр, коммунистсем, сирӗншӗн тӑрӑп р, есӗр, партире тӑманнисем, пирӗншӗн. Ҫакӑн пек пирӗн ӗҫ тухат,—тет вӑл.

Пуху йулашкинчен 12-мӗш суйлав участкинчи суйлавҫӑсене А. И. Стецкий, В. П. Чкалов, З. А. Андрейева йулташсен кандидатурисемшӗн сасӑлама чӗнсе резолюци йышӑнчӗ.

А. И. Стецкий йулташ Ишлей районӗнче

ИШЛЕЙ, декабӗрӗн 9-мӗшӗ. (Телефон тӑрӑх). Пайан „Карл Маркс" колхоз клубӗнче Шупашкар суйлав округӗ тӑрӑх Националӑнӑҫсен Советне депутата суйлама палӑртнӑ кандидат Алексей Иванович Стецкий йулташ хӑйӗн суйлавҫисемпе тӗл пулчӗ. Суйлавҫӑсен пухуне Мишер, Чакӑнар, Кӑшавӑш тата Мӑнал йалсоветӗнчи суйлавҫӑсем пухӑннӑ. Пӗтӗмпе 400 ҫын ытла пулчӗҫ.

Суйлавҫӑсем А. И. Стецкий йулташа ура ҫине тӑрса, тӑвӑллӑн ала ҫупса саламларӗҫ. Хисеплӗ хӑнана пысӑк кӑмӑлпа кӗтсе илчӗҫ. Чи малтанах ПСК(б)П Ишлей райкомӗн секретарӗ Павлов йулташ ПСК(б)Партин Тӗп Комитечӗ чӗнсе каланине вуласа пачӗ. Ун хыҫҫӑн Максимов, Никитин, Волков тата Федоров йулташсем тухса калаҫрӗҫ. Вӗсем пурте ПСК(б) Партин Тӗп Комитечӗ чӗнсе каланине пысӑк кӑмӑлпа ырлаҫҫӗ, партире тӑракан тата партире тӑман большевиксем пӗрле пулса Аслӑ Совета депутата суйлама палӑртнӑ кандидатсемшӗн сасӑлама пӗтӗм суйлавҫӑсене чӗнеҫҫӗ.

Пухура А. И. Стецкий йулташ пысӑк сӑмах каларӗ. Унӑн сӑмахне суйлавҫӑсем пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ, темиҫе хутчен ала ҫупрӗҫ.

Пуху пӗтӗм суйлавҫӑсем патне А. И. Стецкий, В. П. Чкалов тата З. А. Андрейева йулташсемшӗн сасӑлама чӗнсе ҫыру йачӗ.

СОЦИАЛИСĂМЛА ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ЧИ ЛАЙĂХ

Чкалов Валерий Павлович — Совет Сойуз Геройĕ. Вырăс. РСФС Республикĕнчен Национальнăçсен Советне депутата суйлама Горькири № 15 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Иванов Герасим Иванович — ПСК(б)П Обком секретарĕ. Чăваш. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Вăрмарти № 499 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Горкин Александр Федорович — ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретарĕ. Вырăс. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Канашри №500 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Коротков Сергей Ксенофонтович — орденоносец, Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителĕ. Вырăс. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Йĕпреçри №501 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Пумпур Петр Иванович — Мускав Çар Округĕн Çар Сывлăш вăйĕсен начальникĕ. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Вăрнарти №504 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Стецкий Алексей Иванович — ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕн парти пропагандипе агитаци пайĕн пуçлăхĕ. Вырăс. Национальнăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар хулинчи № 496 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Андрейева Зойа Ананйевна — Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ. Сойуз Советне депутата суйлама Шупашкарти №-364 суйлав округĕнче регистрациленĕ. Чăваш.

* * *

Цыганова Йевдокийа Петровна — Куславкка комбинатĕнчи стахановка. Сойуз Советне депутата суйлама Канашри №-365 суйлав округĕнче регистрациленĕ. Чăваш.

Суйлавçăсем кандидатсене саванăçла кĕтсе илчĕç

ТРАК (Хамăр корр. телефонпа). Çак кунсенче ССР Сойузĕн Асла Советне суйлама палăртнă кандидатсем районра суйлав участкисенче пулчĕç. З. А. Андрейева йулташ Йанголинск, Исаково суйлав участкисенче пулчĕ. Цыганова çĕнĕ Икита, Албахтино, Алманчă, Йанкас, Упи, Тимар суйлав участкисенче пулчĕ. Краснов П. Д. Именево, Албахтино, Алманчă, Карайева, Мăн-Шетмĕ суйлав участкисенче пулчĕ.

Суйлавçăсем пур çĕрте те кандидатсене пысăк хаваслăхпа кĕтсе илеççĕ. Урамсене, уйрăм пÿртсене хĕрлĕ йалавсемпе илемлетнĕ. Йанмурзина йалĕнчи суйлавçăсем уйа тухса хĕрлĕ йалавсемпе Цыганована кĕтсе илнĕ. Саванăçлă кĕтсе илеççĕ, саванăçла ăсатаççĕ. Пухусене 300—400 çын таран пухăнать. Ачилă арăмсем ачисемпех пухува пыраççĕ. Вĕсем пухусенче сăмахсем тухса калаççĕ. Ленин—Сталин партишĕн тăрăшса ĕçлекен кандидатсемшĕн сасăлама пулаççĕ. Степан Лапшин (Йанкасри колхозник) 60 çулхи старик акă мĕн калать:

— Патша саманинче епĕр пуçмăр айĕнче пурăннă. Пирĕнтен аçта пынă унта мăшкăланă. Çиме çăкăр çитмен, выçă ларнă. Партипе совет правительстви çеç пире телейлĕ пурнăç туса пачĕ. Мĕншĕн тесен государства ĕçĕнче хамăр çынсем ĕçлеççĕ. Епĕ Чкалов, Цыганова, Краснов йулташсемшĕн сасăлатăп, вĕсемшĕн сасăлама пурне те чĕнетĕп.

Лапшин йулташ, ватă пулсан та, агитатор пулса ĕçлет. Суйлавçăсене кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа ăнлантарать. Унăн сăмахĕпе колхозниксем интересленеççĕ. Мĕншĕн тесен вăл хальхи пурнăçа ĕлĕкхипе танаштарса кăтартать.

А. А. Жданов йулташ сăмахĕ

Ленинградри Володарский суйлав округĕнчи суйлавçăсен пухувĕнче 1937 ç. декабĕрĕн 9-мĕшĕнче каланă

Йулташсем! Чи малтан, мана есĕр „Большевик" завод, „Рабочий" фабрика, Ворошилов йачĕпе тăракан завод, пролетарский завод рабочийĕсемпе служащисем тата Володарский суйлав округĕнчи ĕççыннисен пухувĕ манăн кандидатурăна ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама тăратса мана питĕ пысăк чыс тунăшăн пысăк тав тума ирĕк парăр.

Манăн кандидатурă пирки шанăç ху нине епĕ хамăн заслугăсем вырăнне хумастăп, ăна епĕ Ленин—Сталинăн аслă парти, çĕнтерÿрен çĕнтерÿ патне илсе пыракан парти политикине, пирĕн аслă çулпуçа—Сталин йулташа шанни пулать тесе шутлатăп. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ, сасăсем: „Урра", „Ленин—Сталин партийĕн аслă йалавĕшĕн", „Урра!").

Çакăн пек шанни вăл мана, Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидата, хамăр çĕршывра социалисăм тăвас ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсемпе çĕнтерÿсемшĕн тата та вăйлăрах, тата та çине тăрарах, харсăртарах кĕрешме хушать. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Йулташсем! Большевиксен партийĕ ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлав кунне коммунисsucceeded партире тăман рабочисем, служăщисем, хресченсем, ĕç интеллигенцийĕ хушшинче блок туса, сойуз туса пырать.

Пирĕн партин Тĕп Комитечĕ чĕнсе калани вăл—пирĕн малашнехи кĕрешÿсен программине кăтартса паракан питĕ те чаплă документ пулса тăрать, вăл пирĕн парти партире тăман рабочисемпе, служăщисемпе, хресченсемпе, ĕç интеллигенципе тунă сойузăн ăшчиккине кăтартать.

Пирĕн парти коммунисемпе сочувствующисене хăйсен сасĕсене хĕпĕртсе партире тăманнисемшĕн пама чĕнет, çавăн пекех вăл суйлавĕнче партире тăманнисем те хăйсен сасĕсене пирĕн парти членĕсемшĕн пама чĕнет. (Алă çупаççĕ).

Коммунисемпе партире тăманнисем хушшинчи блок ăнсăртран пулман. ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче коммунисемпе партире тăманнисем хушшинче блок тăвас задач патне çитме пирĕн Октăбĕр революци 20 çул пултарни кирлĕ пулнă.

Совет государствин Аслă оргăн суйлавĕнче пирĕн партипе партире тăманнисем хушшинче тунă пек блок капиталисăмла пĕр государствăра та çук, пулма та пултараймасть. Социалисăм çĕнтерĕвне организациленĕ, хăй тавра совет халăхне пĕрлештернĕ большевиксен партийĕ анчах, совет государствине çĕнтерÿрен çĕнтерÿ патне илсе пыракан парти анчах коммунисемпе партире тăманнисем хушшинче блок тăвас, сойуз тăвас ыйтăва лартма пултарнă, мĕншĕн тесен, пирĕн парти чăннипех хамăрăн пĕтĕм нумай мĕлйунлă халăха хаваслантаракан, унăн шухăшĕсене, интересĕсене, нушисене, ĕмĕчĕсене, кăмăлĕсене пĕлсе тăракан парти. (Алă çупаççĕ. Оваци, „урра" кăшкăраççĕ. Сасăсем: „Пирĕн парти Тĕп Комитетне урра!").

Йулташсем, пирĕн ленинла-сталинла партин социалисăм çĕнтерĕвĕн аслă кĕрешĕвĕнчи пур тапхăрĕсенче епĕр коммунисемпе рабочисем тата хресченсем хушшинчи сойуза тĕреклĕтессишĕн, парти тавра хуларипе йалти пĕтĕм ĕççынни массисене пĕтĕçтерессишĕн тăнă. Халĕ ĕнтĕ епĕр çакăн пек тапхăр патне çитсе тăтăмăр: коммунисемпе партире тăманнисем хушшинчи сойуз совет государствин Аслă оргăнне суйланă çĕрте никĕс пулса тăчĕ; коммунисемпе партире тăманнисен сойузĕ хамăр çĕршывра социализма тĕреклетес, хуласемпе йалти ĕççыннисен пурнăçĕпе культурине лайăхлатас пĕтĕм ĕçре никĕс пулса тăрать. Çакă вăл пирĕн партин питĕ пысăк саванăçĕнĕ телейĕ. (Алă çупаççĕ).

Çак сойуз тĕрекленсе суйлавсен никĕсĕ пулса тăма — социалисăм çĕнтерĕвне тумала пулнă. Социалисăмла государствă тăвас асларан та аслă задача стемлĕх историйĕнче пуçласа пурнăçа кĕртнĕ. Епĕр çĕнĕ халăх — совет халăхĕ турăмăр, вăл халăх експлоатаци майĕкĕчĕ пĕлмест.

Пирĕн çĕршывра експлоататăрла класем çук, тискер капăксемпе пусмăрлакансем çук, рабочи класпа хресченсене чуралантаракансем çук. Рабочисемпе хресченсем — хамăр çĕршыв хуçисем — пĕр тĕллеве пĕрлешнĕ: хăйсем валли ĕçлес, социалисăмла çĕршывшăн ĕçлес. Çак пĕрлĕхлĕ интересем, социалисăмла тăвас çĕршывшĕн пĕтĕмĕшле ĕç — совет халăхĕн политикла тата моральле пĕрлĕхĕн никĕсĕ пулаççĕ те ĕнтĕ, çав пĕрлĕхе халăх тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе илнĕ, вăл социалисăм çĕнтерĕвĕн результачĕ пулать. (Алă çупаççĕ).

Коммунисемпе партире тăманнисем хушшинчи çĕмĕрĕлми сойуза, йулташсем, пурнăç хăйех турĕ, мĕншĕн тесен, пирĕн çĕршывра коммунисемпе партире тăманнисен хамăрăн совет çĕршывне малашне те тĕреклетсе пырас, хамăрăн индустрине малашне те ÿстерсе пырас, колхозсене малашне те чечеклентерсе пырас. Совет Сойузĕнчи пур гражданесен телейлĕ, пуйан, культурлă пурнăçне ÿстерес интересенчен пуçне урăхла интересем çук. Коммунисемпе партире тăманнисен суйлаври сойузĕ вăл—Сталинла Конституци, совет влаçĕн çĕнтерĕвĕпе тĕрекĕн, Ленин—Сталин парти çĕнтерĕвĕн результачĕ.

Халăхсем хушшинчи пĕрлĕхе пире — хамăр халăха çĕнĕрен те çĕнĕ çĕнтерÿсем патне хавхалантарса пыракан, хамăр кĕрешÿ илнисен символĕпе йалавĕ пулса тăракан хаклă Сталин йулташ пачĕ. (Тăвăллăн нумайччен чарăнмасăр алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).

Йулташсем! Марксах: идейăсем вĕсем халăха-йарса илсен вăй пулса тăраççĕ, тесе вĕрентнĕ. Пирĕн парти идейисем, вунпар мĕлйун çынсен идейисем пулса тăчĕç, массăсен тивлечĕ пулса тăчĕç. Маркс пророкла каланă сăмахсем пулса çитрĕç. Епĕр хамăрăн çĕнĕ телейлĕ пурнăçа партире тăманнисенчен уйрăмăн тумастпăр. Коммунисемпе партире тăманнисем хамăрăн çĕнĕ пурнăça пĕрле пĕрлешсе тăваççĕ, хамăрăн çĕнтерÿсен çимĕçĕсене те епĕр пĕрле валеçетпĕр, мĕншĕн тесен, çак çĕнтерÿсем вĕсем, йулташсем, пирĕн партин çĕнтерĕвĕсем кăна мар, пур те пĕрле тунă çĕнтерÿсем. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Коммунисемпе партире тăманнисен сойузĕ, пирĕн çĕршыври 2 мĕлйун коммунисемпе 90 мĕлйун партире тăман суйлавçăсен сойузĕ пире социалисăмăн малашнехи çĕнтерĕвĕсем валли хамăрăн социалисăмла индустрине малашне те тĕреклетсе пыма, колхоз стройне малала чечеклентерсе, тĕреклетсе пыма, хамăр халăха йаланлăхах експлоатаци майĕкĕчĕнчен хăтарма, хамăр хĕрарăмсене йаланлăха ирĕклĕ те тулли правалă тума, хамăрăн ачасем телейлĕ те ирĕклĕ пулма кирлĕ. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн çĕршыври суйлавçă-коммунисемпе партире тăманнисен сойузĕ пире Совет Сойузĕнчи халăха ĕмĕрех тулă, телейлĕ, ырă курса пурăнма, ĕçлев прави, вĕренÿ прави, телейлĕ пурнăç прави йаланлăхах халăхăн уйрăлми тивлечĕ пулма кирлĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Йулташсем, сире паллă, социалисăм ĕçне епĕр халлĕхе пĕччен тăватпăр-ха. Епĕр—тĕнчере пĕртенпĕр, социалисăмла çĕршыв. Пире капиталисăмла государствăсем хупăрласа тăраççĕ. Совет влаçĕпе большевиксен партийĕн Совет Сойузĕнчи гражданесене мирлĕ ĕç пама мĕн пек пысăк вăй хумала пулнине есĕр пĕлетĕр. Епĕр йаланах мир шăн тăнă анчах тăшмансем мирлĕ пурнăçа пĕтерсе лартма тăрăшрĕç, мĕншĕн тесен, совет государствин тăшманĕсемшĕн совет влаçĕ тытăнса тăни йаланах хăрушă вăй пулнă. Социалисăмла системăпа капиталисăмла системă хушшинчи ăмăртура çĕнтерÿ социалисăм йенче пуласшине тăшмансем пĕлеççĕ. (Алă çупаççĕ). Çакăн пирки те вара Совет Сойузĕн тăшманĕсем рабочисемпе хресченсен государствине тискер капăксем пекех кураймаççĕ.

Совет влаçĕн малтанхи кунĕсенчех пирĕн мирлĕ саманашăн пысăк вăй хурса кĕрешме пулчĕ. Епĕр хамăр çĕршыва интервентсенчен çăлса хăвартăмăр. Темиçе тапхăр та пирĕн çĕршыв вăрçă пуслананси умĕнче пулнă. Совет влаçĕпе коммунисен партийĕн аслă тата инçетрине куракан политикине пула анчах, Сталин йулташа пула анчах,—вăл тăшмансен шухăшĕсене витĕрех курать (тăвăллăн алă çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ), вăл совет влаçне курайман капиталисăмла государствăсен темĕн пек чейе те шухăшна йамала тĕввисене те салтма, вĕсем сиксе тухма мĕн те пулсан тума пултарассине, малтанах курма пĕлет, хăйĕн вичкĕнлĕхпе, инçетрине курма пултарнипе, капиталисăмла государствăсем тапăнма пултарассине совет государстви çинчен сирсе йарать,—çакна пула анчах епĕр вунулта çул хушши ĕнтĕ вăрçăсăр пурăнатпăр, мирлĕ пурнăç туйанма пултартăмăр.

Пирĕн тĕп тăшмансем—реакцилĕ-фашисла капиталисăмла государствăсем пулаççĕ. Вĕсем Совет Сойузне хирĕç вăрçă хатĕрлеççĕ. Вĕсен лазутчикĕсем пирĕн çĕршывра ирсĕр троцкисла-бухаринла шпионсем, диверсантсем, террориссем, разведчиксем. Вĕсем ССРС вăй хăватне хавшатас, рабочисемпе хресченсен ĕçне пакăç тăвас тĕллĕвпе чи киревсĕр ĕçсем тăваççĕ. Совет влаçĕ çак лăплапсене çĕмĕрсе тăкмалах çапса хуçрĕ ĕнтĕ. Совет çĕрниче çинчен вĕсене пуçĕпех шăлса йăватăр! (Алă çупаççĕ).

Пирĕн çине тулаш йенчен тапăнасран сыхланма гаранти паракан виçĕ тĕп вăй пур. Пĕррĕмĕш вăй—пирĕн хăватлă, халăх ĕçĕшĕн тăракан совет разведки, пирĕн карательнăй оргăнсем. (Алă çупаççĕ).

Иккĕмĕш вăй—çĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланнă, лайăх организациленнĕ, совет государстви тăшманĕсемшĕн хăрушă, пирĕн пуратакан тăвакан Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Виççĕмĕш вăй—совет государствин аслă, тĕреслĕннĕ, инçетрине курма пултаракан мирлĕ политикĕ. Реакцилĕ-фашисла государствăсем пирĕн тăван çĕршыв чиккисен хытлăхне чухласа пăхма хăйаççĕ пулсан, вара вĕсем совет халăхĕн фашисла бандăсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкма ытлăн-çитлĕнех ситеклĕклĕ çапăçу хатĕрĕсемпе тĕл пулĕç. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Çакăн пек тăрать ĕç коммунисемпе партире тăманнисен ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнчи блок задачисем йĕпĕнĕ. Блок кандидачĕсем çĕнтересçе большевиксен партийĕ шанса тăрать. (Алă çупаççĕ).

Тепĕр икĕ кунтан пирĕн çĕршыври ĕççыннисем суйлав урнисем патне пыраççĕ. Пирĕн партин лозунгĕ — пурте суйлава! Суйлава тăшмансем те пыраççĕ пулсан, вĕсем пыраççех, мĕншĕн тесен, пирĕн суйлавсем пурне те тивĕç, тÿррĕн, пĕртан — пирĕн задач, коммунисемпе партире тăманнисен блок задачĕ çапла пулать: хамăрăн организациленĕхпе тăшмана пĕр пĕччен тăратса хăварасси пулать.

Йулташсем! Суйлавра ĕççыннисен кашни сасĕ паха, мĕншĕн тесен, кашни сасă халăх пĕрлĕхĕн пайĕ пулать,— халăх пĕрлĕхĕ тăшмансемшĕн хăрушă вăй, совет влаçĕн тусĕсемшĕн вăйлă тĕрек пулать.

Сталинла Конституци ĕçре. Çакă пуху — Сталинла Конституцин чĕрĕ вăйне кăтартать. Кунта Володарский суйлав округĕнчи суйлавçăсем пуçтарăннă. Кунта 18 çулхи комсомолецсемпе комсомолкăсем саламлаççĕ, вĕсем пирĕн суйлав саккунĕ тăрăх хамăр çĕршыври тулли правалă граждансем. Кунта епĕр тĕрлĕрен национальнăçсен представителĕсене куратпăр. Кунта епĕр ирĕке тухнă, тулли правалă хĕрарăма куратпăр. Сталинла Конституци ĕççынни массисене Ленин — Сталин партийĕ тавра пĕтĕçтерсе тăракан, рабочисемпе хресченсене çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантаракан хатĕр пулса тăчĕ.

Йулташсем! Пирĕн çĕршывăн Ленинград—промышленнăçпа культурăн пысăк центăрĕ, Совет Сойузĕн Çурçĕр-хĕвеланăç чиккинчи малти форпосчĕ мĕнле вырăн йышăнса тăнине пурте пĕлеççĕ. Ленинград ĕççыннисем пирĕн тăван çĕршыв умĕнче уйрăм ответлăхлă. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пурте пĕр çын пек суйлава тухса, Ленинградпа унти ĕççыннисем социалисăмла тăван çĕршывпа пирĕн большевиксен партийĕн малта тăракан, çĕмĕрлми тĕрекĕ тĕлĕнĕнчен хăйсен задачĕсемпе ответлăхне лайăх пĕлсе тăнине кăтартар. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Ирсĕр предателĕсен, шпионсен, разведчиксен, рабочи класа сутакансен киревсĕр аллинчен вилнĕ Сергей Миронович Кировăн çутă сăнĕ, Ленинградри ĕççыннисемпе пирĕн çĕршыври пĕтĕм ĕççыннисене çĕнĕ çĕнтерÿсем, çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантарса тăтăр, унăн çутă сăнĕ тăшмансене нимĕн хăçарусăр çĕмĕрсе тăкма, коммунисăм пĕтĕмпех çĕнтермеле тăвас кĕрешÿ патне чĕнсе тăракан сасă пултăр!

Сывă пултăр пирĕн аслă совет халăхĕ!

Сывă пулчĕр Ленинград ĕççыннисем!

Сывă пултăр коммунисемпе партире тăманнисен çиттес Аслă Совет суйлавĕнчи блокĕ!

Сывă пултăр большевиксен партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă Сталин! (Нумайччен чарăнмасăр алă çупаççĕ, алă çупни овацийе куçать).

6 пин çынлă митинг пулса иртнĕ

Çĕмĕрле, декабĕрĕн 10-мĕшĕ. (Телефон тăрăх хамăр корр.). Кăнтăрла иртсен 4 сехетре Хĕрлĕ плошчĕд нумай пинлĕ ĕççыннисемпе тулчĕ. Кунта фабрик заводсенчи, учреждениссемпе предприйатисенче ĕçлекенсем, вĕренекенсем пухăнчĕç. Митинга пухăннă рабочисемпе служăщисем пурте ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ пур суйлавçăсене те чĕнсе каланине пысăк тимлĕхпе итлерĕç.

Митинг уçăлсанах малтанах чукунçул станцинче ĕçлекен Козлов йулташ тухса каларĕ:

— Пирĕн чукунçул çинче ĕçлекенсем ССР Сойузĕн Аслă Советне телейлĕ пурнăç туса паракансене, халăх тăшманĕсемпе пĕр таткăсăр кĕрешсе пыракансене суйлама пулаççĕ. Çавăнпа пĕрлех епĕр хамăр станцăна кăтартулă станца тума, стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума пулатпăр, терĕ. Козлов йулташ хыççăн Сытова учительница тухса каларĕ. Вăл: „Сывă пултăр çĕнтерÿсем хыççăн çĕнтерÿ патне илсе пыракан халăхсен çулпуçĕ Аслă Сталин!" тенĕ сăмаха хапăлласа пĕтĕм митингра пулнă халăх „Урра" кăшкăрса нумайччен алă çупать.

Митингра пулнă 6 пинлĕ çын пĕр сасăпа ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине ырласа, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совет депутатне Чкалов, Краснов тата Новиков йулташсене суйлама пулчĕç.

Х. Лисин.

Çĕмĕрле хулинчи ĕççыннисен митингĕ йышăннă резолюци

— Епĕр, Çĕмĕрле хулинчи ĕççыннисем, ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ пур суйлавçăсене те чĕнсе каланине пысăк хаваслăхпа тата тулли кăмăлпа кĕтсе илетпĕр.

— Епĕр, суйлавçăсем, çамрăксем пурте коммунисен партийĕпе унăн çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе социалисăмлă çĕршыва малашне те вăйлатса, çирĕплетсе пыма Коммунисăм обшчествине пĕтĕмпех туса çитерессишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме пулатпăр.

Коммунисен партийĕ пире çавăн пекех пĕтĕм Совет Сойузĕнчи халăха хĕнхуртан, нушалăхран, халăх мăшкăлĕнчен ирĕке кăларса, телейлĕ те саванăçлă пуйан пурнăç, пурне те пĕр тан тивĕçлĕ правасем туса пачĕ.

ССР Сойузĕнчи халăх Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе тунă çитĕнÿсемпе унăн ирĕклĕ паха пурнăçне йаланах тĕплĕн сыхласа тăма тата çĕршывăн тăшманĕсене троцкисла-бухаринла бандитсене, вĕсен агенчĕсене тата буржуалă националиссене хамăр хушăран тĕппипех аркатса, вĕсене пĕтерсе пыма пулатпăр.

Тăван çĕршыва йаланах сыхласа малашне те ăна çирĕплетсе, вăйлатса пырассишĕн ĕçленине кăтартса, епĕр ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама большевиксен партийĕшĕн, шанчăклă та тивĕçлĕ коммунисемпе партире тăман большевиксемшĕн Чкалов, Краснов, Новиков йулташсемшĕн сасăлама пулатпăр.

ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине ответлесе малашне те Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн çыхăнса ĕçлеме пулатпăр.

Сывă пултăр социалисăмла тăван çĕршыв!

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пултăр партире тăракан тата партире тăман большевиксене вĕрентсе çитĕнтернĕ Ленин—Сталин партийĕ! Сывă пултăр ССРС ĕçхалăхĕн çулпуçĕ, саванăçла пурнăç туса паракан аслă учитель Сталин!

Сывă пулччăр пирĕн йуратнă кандидатсем Чкалов, Краснов, Новиков йулташсем!

ЫВĂЛ-ХĔРĔСЕНЕ АСЛĂ СОВЕТА СУЙЛАР!

Спасов Лука Семенович—Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ. Чăваш. Сойуз Советне депутата суйлама Улатăрти № 366 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Краснов Андрей Михайлович—орденоносец, Иетерне районĕнчи „Крестьянская газета" колхоз председателĕ. Чăваш. Сойуз Советне депутата суйлама Çĕмĕрлери №-367 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Харитонова Ољга Тихоновна—Патăрйел районĕнчи Хирти Сĕнтĕрти вăтам шкулти учителница. Чăваш. Националънăçсен Советне депутата суйлама Патăрйелти № 502 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Розанов Алексей Михайлович—Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕ. Вырăс. Националънăçсен Советне депутата суйлама Йетĕрнери № 506 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Моисейева Тамара Алексейевна—Улатăрти паровозсем йусакан заводри механически цехĕн бригадирĕ, Вырăс. Националънăçсен Советне депутата суйлама Улатăрти № 503 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Сахйанова Марийа Михайловна—ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контроль Комиççин Чăваш республикинчи уполномоченнайĕ. Бурйат. Националънăçсен Советне депутата суйлама Шупашкар йал № 497 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Новиков Иван Василйевич—ПСК(б)П Çĕмĕрле райком секретарĕ. Вырăс. Националънăçсен Советне депутата суйлама Çĕмĕрлери № 505 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

* * *

Краснов Петр Дмитрийевич—ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ. Чăваш. Националънăçсен Советне депутата суйлама Çĕрпӳри № 498 Суйлав Округĕнче регистрациленĕ.

Л. М. Каганович йулташ сăмахĕ

Ташкент хулинчи суйлавçăсен митингĕнче 1937 çулхи декабĕрĕн 9-мĕшĕнче каланă

Йулташсем! Епĕ ĕнтĕ Ташкента виççĕмĕш хут килтĕм. Анчах епĕ пирвайхи хут килнипе халĕ килни хушшинче мĕн тери пысăк ăрасналăх! Унчухне граждăн вăрçи çулĕсем, хуçалăх ишĕлнĕ, выçлăхпа сивĕ аптăратнă çулсем пулнăччĕ, унчухне совет влаçне çирĕплетессишĕн кĕрешнĕ çулсем, шургвардейецсемпе интервентсен йулашкисене, пушшех те кунта, Туркестан пулнă çĕрте, Совет влаçĕ унчухне вăйланса çитмен пулнă та, басмачсем канăç паман çĕрте, татăклăнах çĕнтерессишĕн кĕрешнĕ çулсем пулнă.

Манăн сирĕнпе пĕрле, партипе правителствă хушнипе, патша колонийĕ пулнă çĕрте—Туркестанра çамрăк совет республикĕн никĕçĕсене хумала килнĕччĕ. Акă мĕнма ĕнтĕ епĕ Ташкентра, Узбексен Советлă Республикĕн столицинче баллотировкăна тăма савăнсах килĕшӳ патăм. Епĕ сире, йулташсем-суйлавçăсем, ман çине пысăк шанчăк хунăшĕн, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама манăн кандидатурăна тăратса мана чыс тунăшăн пĕтĕм чĕререн бољшевикла тав тăватăп. (Тăвăллăн алă çупаççĕ. „Урра" кăшкăраççĕ).

Епĕ унчухнĕ те, ун хыççăнхи çулсенче те, кашни бољшевик пекех, хамăн ĕçе хамăрăн аслă та никам çĕнтерейми Ленин—Сталин партин членне, унăн шанчăклă ывалне тивĕçлĕн туса пынă. (Тăвăллăн алă çупаççĕ). Ĕнтĕ, йулташсем, пирĕн ĕç анаçлă та тухăçлă пулчĕ пулсан, вăл пирĕн хамăрăн уйрăм çынсен пахалăхĕсенчен мар, пирĕн партин политики тĕрĕс пулнинчен, партин йертсе пыракан вăйĕнчен—Тĕп Комитетран, ĕçхалăхĕн çулпуçĕнчен—пирĕн йуратнă Сталинран килчĕ. (Оваци, Сталин йулташа саламласа „урра" кăшкăраççĕ). Çавăнпа ĕнтĕ коммуниссем партире тăман рабочисемпе, ĕççыннисемпе блок, сойуз туса Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсем пурте, вĕсен рангĕсен, должноçĕсен, положенин ăрасналăхне пăхмасăр, пĕр пекех хаклă, пĕр пекех паха пулса тăраççĕ. Вĕсем хаклă пулса тăни—вĕсене парти партире тăманнисемпе пĕрлех шаннинче, вĕсем халăх интересĕсемшĕн, бољшевиксен партин çулйĕрĕпе политикишĕн пĕтĕм чĕререн тăнинче.

Тĕнчере нумай партисем пур, анчах етемлĕх историйĕ пирĕн парти пек урăх парти пулнине те, пуррине те пĕлмест. Ку вăл каппайни мар, историлĕ обйективлă чăнлăх, вăл тĕрĕссине пирĕн парти Ленинăн—Сталинăн мухтавлă йалавĕ айĕнче тăрса вуншар çул хушши кĕрешсе пынипе кăтартса панă.

Тĕнчере суйлавсенче нумай тума пулакан, анчах нихăçан та пурнăçа кĕртмен декларацисемпе тухакан партисем нумай пур. Çав партисем массăсем патне суйлав кампанийĕсен кунĕсенче çеç, улталаса, суйеçтерсе сасăсем ытларах илме, халăх интересĕсене банкирсен, фабрикантсемпе заводчиксен интересĕсене пăхăнтарма, пыраççĕ. Фашиссем—çав ултавçăсемпе жуликсем çинчен епĕ каламастăп та ĕнтĕ. Кирек те хăш капиталисла çĕршывра та буржуалă политиксем—халăх, пурне те тивĕç, тӳрех, пĕртан суйлав прави тăрăх вăрттăн сасăласа суйламали права илсе, хуçа пулса тăрат, теççĕ. Чăннипе вăл апла мар, вăл сăрланă ултав анчах. Пурнăçра çавсем пурте суйеççкерсем çеç, хут татки çеç пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен чи демократилĕ буржуалă çĕршывра та суйлавсем чухне сасăлакан рабочин, хресченĕн, ĕççыннин суйлав бӳллетенĕсемсĕр пуçне урăх нимĕн те çук.

Кашни буржуалă çĕршыври рабочисем, хресченсемпе интеллигенци, суйлавсенче сасăлаççĕ пулин те, пĕтĕм производствă хатĕрĕсене, фабриксемпе заводсене тытса тăракан, министерствăсемпе правителствăсене хушусем парса тăракан, вĕсен политикине тăвакан хуçасене пăхăнса тăраççĕ. Кирек те хăш çĕршывра та, чи демократилĕ çĕршывра та, темиçе çĕр чи пуйан миллионерсенчен, банкирсенчен, фабриксемпе заводсен хуçисенчен миллионшар çынсен пурнăç кунçулĕ килет, çавсем правителствăн пĕтĕм политикине тăваççĕ. Пайан „хуçа" пек пулса сасăлакан çын, а ыран чăн хуçа—фабрикант—ăна урама кăларса ывăтакан, ĕçсер йулнă çын, ăна ыйткалакан туса хуракан çын—мĕнле хуçа пултарха вăл? Ыранхи кунщăн чĕтресе пурнакан çын—ыранхи кун выçă, сивĕре йулакан, унăн выçса вилмеле килекен çын мĕнле „хуçа" пултăр-ха вăл?

Кирек хăш буржуалă çĕршывра та çавăн пек условисенче ăçтан-ха халăх влаçĕ пулма пултартăр? Çук! Пирĕн советлă, социалисăмлă демократисăм, ăна Сталинла Конституцире çуттăн палăртса хунă, пĕтĕмпех урăхла никĕс çинче тăрат. Пирĕн демократин никĕсĕ—производствă хатĕрĕсен уйрăм харпăрлăхне пĕтерни, експлоататăрла классене—капиталиссемпе помещиксене пĕтерни пулса тăрат.

Пирĕн социалисăмла государствă аллинче, пирĕн çĕршыври ĕççынни массисен аллинче—фабриксем, заводсем, банксем, типографисем. Пирте хулара та, йалта та çынна çын експлоатацилени никĕсĕсене пĕтернĕ, çĕршыва тытса тăрас çĕрте пур граждăнсем те чăннипе пĕртан пулмали условисене тунă. Çак социалисăмла чăн чăн демократийе пирĕн халăх хăйĕн тăван бољшевикла парти йертсе пынипе кĕрешсе илнĕ. Пирĕн парти рабочисем, хресченсем, халăх патне айакран килмен, вăл халăх хушшинчен, чи малтан халăхăн малта пыракан класĕ—унăн авангарчĕ хушшинчен—рабочи клас хушшинчен ӳссе тухнă. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн парти рабочи класпа пĕрле фабриксенче, заводсенче, станоксем патĕнче, домнă кăмакисем патĕнче, паровозсем патĕнче, вагонсем патĕнче, шахтăсемпе забойсенче ӳссе пынă. Унăн шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсем рабочисен подвалĕсенче, ĕлĕкхи ылханлă вăхăтра рабочисемпе хресченсем тӳссе пурăннă правасăрлăха, çуклăха тӳссе ӳснĕ. Пирĕн парти, ĕççыннисен çулпуçĕнче пырса, рабочисен капиталиссене хирĕç забастовкисенче, геройла баррикадăсенче, хресченсен помещиксене хирĕç восстанийĕсенче, пусмăрти халăхсен патша ирсĕрлĕхĕпе пусмăрне хирĕç восстанисенче, халăхăн пур тăшманĕсене хирĕç те йун йухтăрсах ывăнма пĕлмесĕр кĕрешсе пырса, ӳссе, çирĕпленсе, пиçĕхсе пынă.

Парти експлоатацийе пĕтерчĕ, ĕмĕрхи социаллă тата нацилĕ пусмăра пĕтерчĕ. Ĕмĕрхи куљтурсăрлăха, хутла пĕлменлĕхе, тĕттĕмлĕхе, вĕреңменлĕхе пĕтернĕ. Хамăрăн геройла халăха организацилесе, пĕтĕçтерсе, парти пирĕн тăван çĕршыва социалисăм çĕнтерӳвĕсен аслă çулĕ çине илсе тухрĕ. („Урра" кăшкăраççĕ. Тăвăллăн алă çупаççĕ). Буржуалă писаксене, буржуалă политиксене пирĕн партин секречĕ мĕнре иккене, çак вăй ăçтан тупăннине ăнланса илме йăвăр. Пĕчĕк парти пулнă, царисăм ăна çĕмĕрнĕ, унăн чи лайăх çыннисене катăргăна, Çĕпĕре, ссылкăна йанă, çака çака вĕлернĕ. Акă ĕнтĕ, çак парти çĕрçитмĕл миллионлă халăха хăй тавра пĕтĕçтернĕ, тĕнчери пур çĕршывсенче те çĕршер миллион ĕççыннисем ăна йуратаççĕ, шанаççĕ, хисеплеççĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ). Партире тăман кашни çын хăйĕн ăнланăвĕпе, ăсĕпе, чунĕпе тата чĕрипе ăна бољшевиксен партийĕ анчах пусмăртан хăтарнине, социалисăм туса хунине пĕлсе тăрат, вăл пĕлсе тăрат: бољшевиксен партийĕ—унăн партийĕ, унăн Тĕп Комитечĕ, коммуниссем—пĕтĕмпех ĕçхалăхĕпе пĕрле, вĕсем халăхăн ырлăхĕшĕн хăйсен пĕтĕм пурнăçне, хăйсен пĕтĕм вăйĕпе хăватне, хăйсен йунне пĕр тумлам йулмиччене параççĕ. Акă ăçта пирĕн бољшевиксен партин—халăхсем йуратакан хăватлă та мухтавлă партин тымарĕсемпе çăлкуçĕсем. (Тăвăллăн алă çупаççĕ. „Урра" кăшкăраççĕ).

Халăхсен, рабочи класăн иксĕлми вăйĕпе хăвачĕ, вĕсем партийе вĕçĕмсĕр шанни—пĕр çынăн аслă йатĕнче, мĕн пур ĕççыннисемшĕн чи хаклă çын йатĕнче, бољшевиксен, пĕтĕм халăхăн сывăх, тăван, йуратнă çулпуçĕн—Сталин йулташăн йатĕнче пĕтĕçсе тăрат. (Нумайччен оваци тăваççĕ. Сасăсем: „Урра!" „Сывă пултăр Аслă Сталин!") Пирĕн парти хăйĕн пĕтĕм историйĕнче ĕççыннисен массисем шаннине тивĕçлĕ пулчĕ. Пирĕн партин сăмахĕсем нихăçан та ĕçĕсенчен уйрăм пулман—ку вăл чи пахи. Пит ырă бољшевикла лозунгсене, Ленинпа Сталин 1917 çулта панă лозунгсене—„Пĕтĕм влаç Советсене", мир, çăкăр, çĕр, ирĕклĕх лозунгĕсене—пирĕн парти çав лозунгсене панă çеç мар, вăл çав пит пысăк лозунгсемпе плансене пĕтĕмĕшпех пурнăça кĕртнĕ.

Епĕр граждăн вăрçинче çĕнтертĕмĕр. Епĕр, йухăннă хуçалăха уралантартăмăр. Ун хыççăн пирĕн халăх, бољшевиксен партийе йертсе пынипе, хăйĕн çĕршывне социалисăмла çĕнетсе тума тытăнчĕ. Партипе ĕççыннисен массисем хамăрăн çĕршывра социалисăм туса хурассишĕн наступлени тумали сталинла генералънай плана пурнăça кĕрме тытăнчĕç.

Пĕрремĕшпе иккĕмĕш сталинла пйатилеткăсем социалисăмшăн кĕрешӳри татăклă екзамен пулса тăчĕç. Пĕртте ӳстермесĕр калама пулат, пĕрремĕшпе иккĕмĕш пйатилеткăсем, индустриализаци тата пуринчен ытла йалхуçалăхне коллективлани—вăл пит пысăк револљуци, ун пеккине тĕнче нихăçан та пĕлмен. Епĕр тĕнче историнчи ăсларан та аслă задачăна, çĕршер миллион çынсене социалисăм йеңне çавăрассине, йалхуçалăхне çĕнетсе тăвас, хресченсене улшăнтарас, çĕнĕле воспитани парас задачăна пурнăça кĕртрĕмĕр. Пайан Аслă Совета суйламали суйлав кампанине çĕнĕ хресченсем—колхозри хресченсем хутшăнаççĕ, вĕсем ĕнтĕ социалисăмăн йалавĕсем айне татăклăн тăнă. (Тăвăллăн алă çупаççĕ). Истори, нумай пирнесем кӳне, йун йухтарнă, нумай револљуцисене, анчах çав револљуцисем хыççăн халăх нимĕнсĕр тăрса йулнă нумай револљуцисене пĕлет. Пирте те халăхăн тăшманĕсем çавна тăвасшăн пулнă. Йутçĕршывсенчи капиталиссем те çавăн çине кайнă. Епĕр пĕрремĕшпе иккĕмĕш пйатилеткăсене пурнăça кĕртмен пулнă пулсан, епĕр сирĕнпе пĕрле хамăрăн çĕршыва, унăн йалхуçалăхне социалисăмла çĕнтерме тытăнман пулнă пулсан, епĕр сирĕнпе пĕрле металлурги, машиностройени, пăхăрпа хими завочĕсем туса лартман пулсан, епĕр чукунçул транспортне çирĕплетмен пулсан, епĕр йалхуçалăхне хамăр çĕршывра тунă çĕршер пин тракторсемпе комбайнсем, автомобилсем паман пулсан—вара пирĕн револљуцин кĕрешсе илнисене пĕтерсе хума пултарнă та пулĕччĕç. Вара пирĕн умра капиталисăм таврăнас хăрушлăх пулнă пулĕччĕ. Çавна тăвасшăн пулнă та фашисла, троцкисла-бухаринла шпионсем, буржуалă националиссем, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннăскерсем, империалисăмла государствăсене тăра кĕрĕшнĕ йытăсем, йутçĕршыв разведкисен агенчĕсем. Анчах пирĕн халăх телейлĕ,—ăна кĕрешӳре бољшевиксен партийĕ, политикăлă ăсланпа никам хуçайми хăватăн генийĕ—Сталин йулташ йертсе пырат. (Тăвăллăн алă çупаççĕ. „Урра" кăшкăраççĕ).

Пирĕн халăх, тăшмансене çĕмĕрсе тăкса, йăварлăхсемпе çитменлĕхсене çĕнтерсе пырса, пĕрремĕшпе иккĕмĕш сталинла пйатилеткăсене пурнăça кĕртсе, хăватлă социалисăмла индустри, тĕнчери чи шултра социалисăмла йалхуçалăхĕ турĕ. Капиталисăм таврăнас çукки, социалисăм çĕнтерни халь ĕнтĕ уççăнах курăнса тăрат. Сталинла икĕ пйатилеткăсене пурнăça кĕртнĕ хыççăн пирĕн хурçă та, моторсем те, чукунçул транспорчĕ те, çăкăр та, хими те, самољосем те—хамăрăн тăван çĕршыва сыхлама, пирĕн чиксем çине тапăнма хăйакан кирек хăш тăшмана та пĕтерсе хума мĕн кирли пурте пур. (Тăвăллăн алă çупаççĕ. Нумай пин çын пĕр харăс „урра" кăшкăраççĕ).

Пирĕн, йулташсем, пĕтĕм халăх йуратакан, чи лайăх техникăпа хĕçпăшалланнă, никам çĕнтерейми, мĕншĕн кĕрешмелине пĕлсе тăракан, Рабочисемпе Хресченсен мухтавлă Хĕрлĕ Çарĕ пур. (Вăйлăн „урра" кăшкăраççĕ. Тăвăллăн алă çупаççĕ). Анчах çĕнĕ лайăх йапаласем пуррипех çитмест. Чи пахи вăл çакă—халĕ ĕнтĕ пирĕн çĕршыван çĕнĕ, пит ырă, ӳссе çитĕннĕ, куљтурлă, хăйĕн халăхĕшĕн шанчăклă тăракан çынсем пур. Çакăн пек çынсем пирĕн çĕршер пин, миллионшар. (Алă çупаççĕ).

Ĕнер епĕ Ташкентри красновосточнай заводра чукунçул çинче ĕçлекен пĕр вата рабочине тĕл пултăм. Вăл мана хăйĕн çемйин пурнăçĕ çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Унăн пĕр ывăлĕ ĕнтĕ инженер-строител, тепĕр ывăлĕ—техник, арăмĕ—общественнăлă ĕçре активлă ĕçлет. Ку вăл, йулташсем, пĕртеппĕр факт мар. Çĕршер пин, миллионшар çынсен пурнăçĕ çавăн пек. Çĕнĕ çынсем, çĕнĕ çĕршыв, çĕнĕ куљтура—акă мĕнпе пыратпăр епĕр Аслă Советăн суйлавне. Йепле-ха ĕнтĕ, йулташсем, хавасла ĕçлекен пулас мар, йепле-ха ĕнтĕ хамăрăн партийе йуратас мар, йепле-ха ĕнтĕ халăхăн çав çĕнтерӳсене тума май пана çынна, пире социалисăмăн çĕнтерӳвĕ патне илсе çитерне çынна йуратас мар, йепле-ха ĕнтĕ аслă Сталина йуратас мар! (Нумайччен алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).

Ленинăн—Сталинăн наци политикине пурнăça кĕртсе пыни пирĕн совет государстви хăватне халичченнихăçан пулман çӳллĕше çĕклентерчĕ. Пирте текех ĕлĕкхи пек кайа йулнă нацилĕ окраинăсем çук. Вунпĕр нацилĕ Сойузлă республикăсем тунă, вĕсем хăйсен промышленнăçĕпе, колхоз стройĕпе, формипе нацилĕ, ăшчикĕпе социалисăмлă хăйсен куљтурине тăшмансене хăратма тата ĕç етемлĕхне савăнтарма чечекленсе пыраççĕ. Пирĕн нацилĕ республикăсем пĕрлĕхлĕ хăватлă вăйа, никам уйăрайми пĕрлĕхлĕ, хăватлă государствăна пĕрлешнĕ, вăл государствă Советла Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ йатла. (Алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).

Епĕ 1920 çулта пĕрремĕш хут унчухнехи Туркестана килнĕ тапхăра аса илетĕп, унта вăл вăхăтра совет влаçĕн никĕçĕсене çеç хываччĕç-ха. Пире унчухне, совет влаçне тĕреклетессишĕн кĕрешнĕ чухне куљтурсăрлăха, тĕттĕмлĕхе тата чылай вăйла пулнă националисла уйрăмлăха çĕнтерме тиврĕ. Социалисăмшăн кĕрешсе çине тăрса ĕçленипе халăхсен никам уйăрайми сталинла туслăхĕ тупăнса тухрĕ, вăл туслăха Сталинла Конституцире чаплăн палăртса çырса хунă.

Пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсем, чи малтан фашиссем тата вĕсен разведчикĕсем—троцкисла-зиновйевла-рыковла-бухаринла шпионсем пирĕн пĕрлĕхлĕ совет государствине вăйсăрлатма тăрăшаççĕ. Анчах вăл пулмаст! Пирĕн Совет Сойузĕ вăйлине, ăна никам та

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Партине чĕререн тав тăватпăр

ПАТĂРЙЕЛ (Хамăр корр. телефон тăрăх, 19—XII). Хĕрлĕ Туçари колхозниксемпе йединоличниксем хăйсен пĕрлешӳлĕ пухувĕнче Парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине ытла та хавасланса вуларĕç. Акă мĕн калаççĕ вĕсем хăйсен резољуцийĕнче:


Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе çеç ĕлĕк тĕттĕм, кайа йулнă Российă капиталиссемпе помещиксен пусмăрĕнчен хăтăлса пысăк йалхуçалăхлĕ, индустрилĕ çĕршыв пулса тăчĕ. Халăх тăшманĕсемпе хайаррăн кĕрешсе пырса, пире телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн епĕр коммуниссен партине чĕререн тав тăватпăр. Епĕр Аслă Совета суйлама пурте пĕр кăмăлпа тухса, партипе пĕр шухăшлă пулса, хамăр кандидатсемшĕн: Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемшĕн сасăлатпăр.

Сывă пултăр пирĕн телейлĕ тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пире çĕнĕ Конституци туса паракан Аслă çулпуç, учител, тăван атте Сталин йулташ!

Çак пухурах, Парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине сӳтсе йавнă хыççăн, 5 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

Ник. Пушкин.
Ф. Майков.



Л. М. Каганович йулташ сăмахĕ

(ЙУЛАШКИ)

нихăçан та çĕмĕрме пултарайманнине тăшмансем пĕлсе тăччĕр. (Алă çупаççĕ). Совет халăхĕ, парти йертсе пынипе, тăван çĕршывăн мĕн пур предателĕсемпе, буржуйла националисемпе, йунлă фашисăмăн троцкисла-бухаринла шпионĕсемпе пĕр хĕрхенусĕр кĕрешсе пырать. Пирĕн мухтавлă наркомвнуделĕцăсем, халăх массисен ирĕкне пурнăça кĕртсе, халăхăн ирсĕр, тен те ирсĕр тăшманĕсене, фашисăмăн суранчăк йыттисене пĕрин хыççăн теприсене тарă шыв çине кăларса пĕтерсе пыраççĕ. Суйлав кампанийĕ ĕççыннисене тата çирĕпрех пĕтĕçме пулăшĕ, социалисăмăн мĕн пур тăшманĕсене, Узбекистанра йулнисене, çĕнтерулĕ малала кайма чăрмантаракансене вĕçне çитиех тăпăлтарса кăларса нимĕн хăвармиччене пĕтерсе хумашкăн ĕççыннисен вичкĕнлĕхĕпе сыхăлăхне тата çивĕчрех ÿстерме пулăшĕ.

Пирĕн пата шпионсене çĕнĕрен те йарса тăрĕç. Анчах пролетари диктатурин хĕрхенусĕр алли халь тытмасăр йулнă тăшмансене йарса тытса вĕсене йăлтах вĕлерсе пĕтерессине тăшмансем пĕлсе тăччĕр. Кашни совет гражданинĕ декаберĕн 12-мĕш кунĕнче, хăйĕн бюллетенне суйлав йещчĕкесене йарса, аслă та таса ĕç тăвать. Вăл пирнĕ çулсен итогĕсене, пирĕн çĕршыври социалисăмăн кĕрешÿвĕсемпе çĕнтерÿвĕсен итогĕсене пĕтĕçтерсе тухать. Анчах итогсене çеç те мар. Пĕтĕм суйлав кампанийĕ пынă вăхăтра тата декаберĕн 12 мĕш кунĕнче суйлавçăсен нумай мĕлйунла массисем хăйсен речĕсене парти тавра, совет влаçе тавра татах та çирĕпрех пĕтĕçтереççĕ. Ĕç ыннисен мĕн пур массисем хăйсен вăйĕсене халăх тăшманĕсене хирĕç, тулашри хăрушлăхсене хирĕç малала кĕрешме мобилизацилеççĕ.

Суйлавçă йулташсем! Пĕтĕм Союзри Коммунисен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ хăй чĕнсе каланипе мĕн пур суйлавçăсене мĕнле заявление рангне пахмасăрах, пĕтĕм кандидатсемшĕн, парти партипе тăманнисемпе блок туса, союз туса тăратнă кандидатсемшĕн сасă пама чĕнчĕ. Çака вăл—есĕр пирĕн çĕршыв мĕн пур тăшмансене хăратма, пирĕн туссене савăнма ытларах та ытларах чечекленсе пыыăр тесе сасăласси пулать. Есĕр тата лайăхрах, тата ытларах пуйан пурнăçшăн сасăлаттăр. Есĕр хăватлă совет халăхĕшĕн, аслă Совет Союзĕнчи мĕн пур национальнăççен туслăхĕшĕн, пĕрлĕхĕшĕн сасăлаттăр. Есĕр социалисăмăн çĕнĕ аслă çĕнтерÿвĕсемшĕн сасăлаттăр. (Хăрăссăн алă çупаççĕ).

Йулташсем, эпĕ çинчен, Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидат çинчен калас пулсан, епĕ сире малашне те ĕççыннисемпе çирĕп çыхăну тытма, епĕ хам унăн хушшинчен тухнă рабочи класпа çирĕп çыхăну тытма, халăх интересĕсемшĕн малашне те епĕ халиччен большевикла парти ретĕнче тăрса кĕрешнĕ пекех кĕрешме сăмах паратăп (Алă çупаççĕ, хыттăн „урра" кăшкăраççĕ).

Епĕ сире малашне те пирĕн партин шанчăклă ывăлĕ пулăп, хамăн аслă учителĕн Сталин йулташăн тĕрĕс тата пĕтĕм чĕререн парăннă ученикĕ пулăп, тесе шантаратăп. (Тăвăллă оваци нумайччен чарăнмасăр тăрать. „Сывă пултăр пирĕн йуратнă Сталин!" тесе кăшкăраççĕ).

Сталинла Конституци тăрăх пĕрремĕш хут иртекен суйлавсене мĕн пур суйлавçсем тухасси пирки епĕр иккеленместпĕр. Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем 1937 çулхи декаберĕн 12-мĕшĕнче Совет Союзĕнчи халăхсен хăватне, пирĕн партипе халăх масси хушшинчи çыхăнусене никам та уйăрма пултарайманнине пĕтĕм тĕнче умĕнче тепĕр хут кăтартса парасси пирки епĕр иккеленместпĕр.

Йулташсем, ĕççынни массисем, чи малтан рабочи клас. Аслă Совет суйлавне халех ĕнтĕ стахановла йухăмăн çĕнĕ çеккленÿвĕпе палăртуреç. Социалисăмла хуçалăхăн мĕн пур облаçĕсенче—кăмрăк, металлурги, нефт промышленнăçĕнче, чукунçул транспортĕнче, йалхуçалăхĕнче—епĕр çĕнĕ вăйла хасларлăх хутшăнса кунине, ретсем пĕтĕçнине, ĕçтухăçлăхĕ çекленнине куратпăр. Аслă Совет суйлавĕсем пирĕн Совет Союзне çĕнĕрен çĕнĕ çÿллĕше çĕклесси пирки иккеленмеле мар. Пирĕн аслă халăх хăйĕн никам çĕнтереймен партийĕ йертсе пынипе, хăйĕн çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе коммунисăмăн çĕнĕ аслă çĕнтерÿвĕсем патне малала та малала пырать! (Тăвăллă оваци нумайччен чарăнмасăр тăрать, хăватлă „урра" кăшкăрни пĕр йенчен тепĕр йенне йанăраса кайса, Хĕрлĕ плошчĕдре йанăраса тăрать, Ташкентри Хĕрлĕ плошчĕдрен паракан передачăна рупорсем патĕнче итлесе тăракан вуншар пин суйлавçăсем патне урамсене, скверсене куçать. Сталин йулташа, большевикла партинĕ чысласа, сталинла Наркома Л. М. Кагановича чысласа вырăс, узбек чĕлхипе саламласа кăшкăрнисем чарăнма пĕлмесĕр кĕрлеççĕ).

★ О ★

Аслă Совета суйлама çĕнĕ çитĕнÿсемпе кайатпăр

Çĕмĕрле уйав тумпе тумланнă. Каçхине çĕршер електричества ламписем хулан илемлĕхне сутатса тăчĕç. Комбинатăн икĕ хулă çурчĕ çинче 6 метр тăршĕ фанерă хăмисем çине ÿкернĕ Ленинпа Сталин сăнĕсем таçтан катаранах курăнса тăраççĕ. Мĕн чухлĕ лозунгсем, плакатсем, хĕрлĕ йалавсем? Шутласа та кăларас çук.

Пайан Çĕмĕрле, Сталинла Конституцийĕ çирĕплетни çулталăк тултарнине уйавлать.

11 сехет тĕлнеле хула урамĕсем тăрăх нумай пинлĕ ĕçхалăх колоннисем ирте пуçларĕç. Таврара йурă, оркестр сассисем йанраса тăраççĕ. Ака комбинатра, „Большевик" заводра ĕçлекенсен колонникем пыраççĕ. „Большевик" завод хăйĕн çулталăкри производства планне нойаберĕн 28-мĕшнех тултарнипе савăнать. Колоннă пуçĕнче заводри чи лайăх стахановецсем Карнаковпа Назаров йулташсем хĕрлĕ йалавсем йатса пыраççĕ. Унтах авă Пархисенко йулташ бригадин çыннисем. Ку бригада стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхне хутшăнса кунран кун пысăк çитĕнÿсем тăвать. Сталинла вунăкунлăхăн малтанхи кувĕнче те, иккĕмĕшĕнче те плана 104 проц тултарнă.

12 сехетре Хĕрлĕ плошчĕдре митинг уçăлать. ПСК(б) Парти райкомĕнчен—Матвейев, райĕçтăвкомран—Носков, комсомол райкомĕнчен—Бобров, „Большевик" заводри рабочисенчен — Шорин, довереннай—Радайкин тата пионерсемпе шкул ачисенчен Йегорова йулташсем тухса саламлă сăмахсем каларĕç.

— Епĕр, „Большевик" заводра ĕçлекенсем Аслă Совета суйлама ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кайатпăр. Халĕ епĕр стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхне хутшăнтăмăр. Епĕр çулталăкри плана та срукченех тултарнă. Çавăнпа та вунăкунлăхра нихçан туман çитĕнÿ тума, декаберĕн 12-мĕшĕнче пурте пĕр харăссăн урнăсем патне пырса сасăмăрсене хамăр кандидатсемшĕн—Чкалов, Новиков, Краснов йулташсемшĕн паратпăр,—терĕ Шорин йулташ митингра.

Митинг хупăнсан колоннă хыççăн колоннă трибунă патĕнчен иртет.

— Сывă пултăр Сталинла Конституци тата ăна туса паракан Аслă Сталин!

— Фашисăм тĕп пултăр!

„Урра" кăшкăрни оркестр сассипе пĕрле нумайччен йанраса тăрать. 5 пин çынла митинг кăнтăрла иртсен 2 сехетре çех саланать.

Хар. Лисин.

ПУРТЕ СУЙЛАВА!

(В. Б. Карецки художник ÿкерчĕкĕ). (Сойузфото).

Хĕрÿллĕн саламлаççĕ

ПАТĂРЙЕЛ, декаберĕн 9-мĕш („Чăваш Коммунĕ" корр.). Пайан район центрĕнчи учрежденисемпе колхозсенче митингсем туса Парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине сÿтсе-йавреç. Митингсенче тухса калакансем Парти Тĕпкомне, Сталин йулташа хĕрÿлĕ саламлаççĕ.

Патăрйеленче пулса иртнĕ служащисен, колхозниксен, вĕренекенсен пĕрлешÿлĕ пухувĕ парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине вуласа сÿтсе-йавнă, хыççăн, çапла йышăнчĕ:

— Аслă Совета суйламали декаберĕн 12-мĕш кунĕ пиреншĕн пит пысăк праçник пулса тăрать. Çак кун епĕр пурте пĕр шухăшлă пулса партин чи лайăх ывăл-хĕрĕсене Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсене Аслă Совета суйлатпăр.

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери ĕç халăхĕн çулпуçĕ Сталин йулташ!

Çавнашкалах Кивĕ Ахпÿр йенчи колхозниксемпе йединоличниксем Парти Тĕпкомĕ çыруне вуласа тухса ăна чĕререн ырларĕç. Весем те декаберĕн 12-мĕшĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн пĕр шухăшлăн сасăлама пулчĕç. Ку йалта Парти Тĕпкомĕн çыруне вуласа ăнланнă хыççăн 3 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

★ О ★

Колхоза кĕреççĕ

ЙЕПРЕÇ. Хумри Ишекре Сталинла Конституциле „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренес ĕçе лайăх организациленĕ. Майĕпе вĕренме кружоксене çÿрекен йединоличниксем лайăх пурнăç колхозра çеç пулнине ăнланса илчĕç. Халĕ 5 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

А. Николайев.

Хуткупăс фабрикне туса пĕтереççĕ

Улатăрти хуткупăс фабрикне туса çитереççĕ. 1938 çулхи апрелĕн 1-мĕш тĕлне 3 цех ĕçлеме тытăнать.

Декаберĕн 12-мĕшĕнче квалификациле рабочисем вĕрентсе хатĕрлеме 6 уйăхлăх курс уçăлать. Унта 326 çын вĕренмеле.

1938 çулта ку фабрикă венски хуткупăс 20.000 штук тата байан 2.000 штук туса кăлармала.

Икĕ ăру суйлавра

Историлĕ кун — декаберĕн 12-мĕшĕ çитрĕ. Пайан декаберĕн 12-мĕшĕнче аслă совет халăхĕ социалисăмăн хĕрлĕ йалавĕ айне тăрса суйлав урнисем патне тулли те хаваслă кăмăлпа кайать. Халăх хăйĕн сассине социалисăм çĕршывĕн чи лайăх ывăл-хĕрĕсене, социалисăмла тăван çĕршывăн мухтавлă патриочĕсемшĕн парать, Ленин—Сталин парти тавра тата çирĕп пĕрлешсе тăнине кăтартать.

Пирĕн суйлавсен итогĕ пĕтĕм капиталисăмла тĕнчене кисретет. Сасăсене шутласа тухни пирĕн совет влаçĕ пек, хăватлă, тĕреклĕ, авторитетлă влаç тĕнчере çуккине тата пулманнине кăтартать. Чăн та çакăн пек çирĕп те тĕреклĕ влаç тĕнчере урăх çук, пулман та. Пирĕн партин вăйĕ, пирĕн влаçăн вăйĕ ĕççыннисем, ССР Союзĕнчи халăхсем пĕрлĕхлĕ пулнинче, вĕсем Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса кĕрешнинче тăрать.

Пирĕн çĕршыври халăхран çурри иттла ĕлĕкхи ылханлă пурнăça пĕлмест. Социалисăм строителствин çамрăкĕсен нумай миллионла çарĕ ĕлĕкхи, капиталиссемпе улпутсен саманинчи йăвăр та асаплă ĕçе тÿссе курман. Вăтă çынсем каласа панă тăрăх çеç, кĕнекесем тăрăх çеç пирĕн çамрăксем жандармă, урйадник çинчен, правасарлăх, чуханлăх, тĕттĕмлĕх, выçлăх çинчен, рабочисемпе хресченсен йăвăр пурнăçне пĕлеççĕ.

Патша Российĕ халăхсен тĕрми пулнă. Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ халăха çак тĕрмерен ирĕке кăларчĕ. Çавăнпа та социалисăм çĕршывĕнчи суйлавçăсем хăйсен влаçĕн аслă органне суйлама пĕр шухăшлă пулса кайаççĕ. Вĕсем хăйсен кандидачĕсемшĕн—парти организацисем партире тăманнисемпе пĕрле маларгнă, партири тата партире тăман большевиксемшĕн сасăлаççĕ. Вĕсем партишĕн, Сталиншăн, халĕхи телейлĕ пурнăçшăн, малалахи тата телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн сасăлаççĕ.

Аслă совет халăхĕн шухăшĕ, ĕмĕчĕ пĕрлĕхлĕ. ССР Союзĕнчи пур гражданĕсем те,—вăтă старикĕенчен пуçласа 18 çул тултарнă çамрăка çитиччен, кăвак çÿçлĕ карчăкран пуçласа чечеклĕ хĕре çитиччен—пурте савăнăçлă кунсенче пурăнаççĕ. Çакна районсенче, колхозсенче предприйатисенче, учрежденисенче пулса иртнĕ суйлавçăсен канашлăвĕнче старикĕсемпе карчăксен, качăсемпе хĕрсен хĕрÿлĕ, çулăмлă сăмахĕсенчен лайăх курма пулать. Ваттисем те халĕ çамрăк, вĕсем те халĕ телейлĕ те савăнăçлă.

Икĕ ăру. Иккĕмĕш çамрăклăх пуранакан старикĕсемпе карчăксем, вĕсен ачисем, çамрăксем телейлĕ те савăнăçлă. Çаксем социалисăмăн историлĕ çĕнтерÿсене, малашлăхне хăватлăн кăтартса параççĕ. Пирĕн çĕршывра ваттисем те, çамрăккисем те шĕртан телейлĕ. Вĕсемшĕн большевиксен парти, совет правителствин, Сталин йулташ тăрăшать. Совет çĕршывĕнчи старикĕсем капиталисăмла çĕршывсенчи ват çынсен йăвăр пурнăçне курмаççĕ. Вĕсен пурнăçĕ савăнăçлă та хаваслă, ырanхи пурнăç мĕнле пуласиничен хăрамалли çук.

— Епĕ 65 çулта. Ĕлĕкхи асаплă пурнăçăн аса-илÿвĕсем кайа тăрса йулчĕç. Кам пирĕнрен унчухне мăшкăламан-ши? Ĕлĕкхине асăнса халĕхи пурнăça кăмăлсăр тăвас килмест. Совет влаçĕ, Октябрьти революци, Ленин—Сталин партийĕ пире телейлĕ те савăнăçлă пурнăç пачĕ. Пиреншĕн халĕ пурнăçăн кашни кунĕ хаклă, халĕ пурнăça хамăрăн тăван çĕршыва мĕнле те пулин ытларах усă парасшăн пурнас килет, тет Улатăрти „Спортинвентарь" фабрикĕнчи рабочи Нестеров.

Совет влаçĕ старикĕсемшĕн тăрăшнине çак факт та уççăн кăтартса парать. Пĕр РСФСР-ре çеç 800.000 старик йаланах государствăран пулăшу илсе тăрать. Кăçал государствă старикĕсене пенси пама уйăрнă укçа шучĕ çур миллиард тенкĕрен иртсе кайнă. Пирĕн правителствă вăтă колхозниксемпе йединоличниксене государствăна обйазателнăй йĕркепе тăратмали поставкăсенчен, налогран йăлтах хăтарчĕ. 18 облаç тăрăх çак лĕготăна 366 пин хуçалăх илнĕ.

Пирĕн çамрăксем, ĕççĕрлĕхе, капиталисăмла çĕршывсенчи пек правасăрлăха, гелепсĕрлĕхе, тĕттĕмлĕхе пĕлмеççĕ. Пирĕн çамрăксем пуласлăх, пирĕн шанчăк. Совет çамрăкĕсен сулĕ уçă.

Илер Улатăрти паровозсем йусакан заводри работницăна, мастăра Моисейевăна. Вăл хăйĕн пурнăçĕ çинчен çапла каласа парать.

— Епĕ кивĕ строла астумастăп, аттепе-анне каласа панă тăрăх çеç пĕлетĕп. Анчах епĕ халĕ хамăрăн тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн, пуйанлăхĕшĕн ĕçлемелле пулнăшăн шутсăр савăнатăп.

Совет çамрăкĕсем çĕршыв тата Сталин йулташ шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăça кĕртеççĕ. Социалисăмла ĕçĕн паттăрĕсем, хăватлă лĕтчиксем, танкистсем, музыка мастăрĕсем, учоныйсем, мухтавлă пограничниксем; социалисăмла уйхирĕн паттăрĕсем пур çĕрте те совет çамрăкĕсем социалисăм йалавне çÿле çĕклеççĕ. Халăх вĕсене шанать, вĕсене йуратать, хаклать, мухтать.

Çавăнпа та ССР Союзĕн Аслă Совета депутата суйлама палартнă парти çулпуçĕсен—Сталин, Молотов, Калинин, Каганович йулташсен йачĕсемпе йунашар вăтă старикĕсен, карчăксен, Моисейева пек çамрăк хĕрсемпе качăсен йачĕсем пур. Çавăнпа та пирĕн çĕршыври ваттисемпе çамрăккисем хăйсен тăван çĕршывне, Ленин—Сталин партине чĕререн йуратаççĕ.

Çакăнта пирĕн аслă вăй, çакăнта пирĕн çĕршывăн, пирĕн стройăн чăпăлăхĕ. Пурлăх мĕнли мар, хăш наци пулни мар, мĕне çулти мар, арçын е хĕрарăм пулни мар—ĕç, ĕçлесе общестăвăшăн тăрăшни, тăван çĕршывшăн чĕререн тăрăшса ĕçлени халăх суйланă çын, ССР Союзĕн Аслă Советĕнчи халăх представителĕ пулма права парать.

— О —

Кино çинче суйлав техникине курчĕç

Çĕрпÿре „Как будет голосовать избиратель" йатлă кино-фильм кăтартрĕç. Çĕрпÿ хулинчи тата çывăхри йалсенчи суйлавçăсем ку кинона питĕ нумайăн курчĕç.

Абашев.

Шупашкарти предприйатисем Сталинла вунăкунлăхра

** Спирт заводĕнчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксем стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕнче çулталăкри планран иртерсе 50 пин тенкелĕх продукци кăларассишĕн кĕрешеççĕ. Заводри бригадăсем, рабочисем кулленех ÿсĕмсем туса пыраççĕ. Пегайева йулташ йертсе пыракан бригадă декаберĕн пĕрремĕшĕнчен пуçласа нормана 140 процентран иртерсе тултарса пырать. Декаберĕн 9-мĕшĕнче 148 процент тултарнă. Богданова йулташ йертсе пыракан бригадă та кайа йулмасть, нормăна 145 процент таран тултарса пырать. Уйрам стахановецсем: Краснова, т. ыт. те нормана 160 процент тултарса ĕçлеççĕ.

** Тир-сăран завод коллективĕ суйлав кунне çулталăк планне тултарнипе кĕтсе илет. Заводри стахановецсем: Кирилов, Кудрйавцев, Кузьмин Сталинла вунăкунлăх хушшинче йаланах 2 хут нормă тултарса пычĕç. Йудина, Марков, Лаптев йулташсем куллен 150 процентран иртерсе тултарчĕç.

** Деткомиссин Шупашкарти фабрики рабочисем нойабĕр уйăх планне 123 процент тултарнă хыççăн Сталинла вунăкунлăха хутшăнса тата та пысăк ÿсĕмсем тăвассишĕн кĕрешÿве тухрĕç. Фабрикра стахановла йухăм вăйлансах пырать. Халĕхи вăхăтра стахановецсен ретĕнче 23 çын тăраççĕ. Федосейев йулташ вунăкунлăха хутшăннăранпа нормана 144 процент, Старов—19[illegible] процент, Тарасов—180 процент, Болдырева—172 процент тултарса пычĕç. Фабрик плана тултарас тĕлĕшпе кунран кун лайăх тĕслĕхсем парса пынĕ. Декаберĕн 1-мĕшĕнче плана 105 процент тултарнă пулсан, иккĕмĕшĕнче 109 процент, виççĕмĕшĕнче 141 процент, тăваттăмĕшĕнче 156 процент, саккăрмĕшĕнче 154 процент тултарнă. Фабрик коллективĕ суйлав кунне çулталăкри планран иртерсе темиçе пин тенкелĕх продукци панипе уйавлать.

Шкул ачисем Канашри В. П. Чкалов йулташ килнĕ йатпа пулса иртнĕ митингра.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 648. Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13700. 58—62 см. 1—1 п. л.